Муркаш район хаçачӗ

# Çӗнтерӳ ялавӗ

1944 çулхи çу уйăхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

94 (8055) № ✻ Юн кун, 2012 çулхи раштав (декабрь) уйăхӗн 5-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

Раççейре

## Ку хӗл сивӗ пулмалла

Ĕнер РФ Гидрометцентр пуçлăхӗ Роман Вильфанд ку хӗл иртнӗ 20 çулхисенчен чи сивви пулассине пӗлтернӗ. Мӗншӗн тесен юлашки çулсенче хӗлсем сивӗ килмен. Апла пулин те хӗл çав тери сивӗ пулмӗ тенӗ вăл.

«Хӗл пӗр йышши пулмасть, ăшăрах çанталăксем сиввисемпе ылмашăнĕç», – палăртнă Вильфанд.

Декабрьте, вăл каланă тăрăх, Раççейӗн тӗп регионӗнче температура нормăна çывăх пулмалла.

## Хисеп грамотине тивӗçнӗ

Юрист кунӗнче, декабрӗн 3-мӗшӗнче, Чăваш Республикин Юстици министерствинче професси уявӗн кунне ирттернӗ. Чăваш Республикин юстици министрӗ Н. Прокопьева республика Юстици министерствин тата миравай судьясен аппарачӗсен сотрудникӗсене професси уявӗпе саламланă. Савăнăçлă мероприятире миравай судьясен аппарачӗсен чи лайăх ӗçченӗсене Чăваш Республикин Юстици министерствин Хисеп грамотине панă. Пирӗн районтан çак чыса районти 1-мӗш номерлӗ суд участокӗн миравай судйин аппарачӗн эксперт специалисчӗ **Вероника Александровна ТОЛИКИНА** тивӗçме пултарнă.

**Хамăр инф.**

Кӗскен

## Районта – 400-мӗш ача

Ноябрь уйăхӗн юлашки кунӗнче район администрацийӗн ЗАГС пайӗнче 400-мӗш ачана регистрациленӗ. Вăл – Юнкă салинчи Оксана Валерьевнăпа Вячеслав Никифоровӗч Михайловсен çемйинчи виççӗмӗш ача. Ашшӗпе амăшӗ ывăлне Николай ят панă.

Николая ЗАГС пайӗнче ӗçлекенсем парнепе савăнтарнă, унпа пӗрлех район администрацийӗн пуçлăхӗн саламлă çырăвне те панă.

**Хамăр инф.**

Çырăнтару – 2013

**Хаклă вулаканăм! Районти «Çӗнтерӳ ялавӗ» хаçата 2013 çулхи пӗрремӗш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççӗ. Аса илтеретпӗр, райхаçатăн шăмат кунхи кăларăмӗ июльтен 8 страницăпа тухма пуçларӗ.**

**«Çӗнтерӳ ялавне» 6 уйăха çырăнмалли хак – 204 тенкӗ.**

**Райхаçат редакцийӗ.**

Çутă малашлăх – ачасенче

# Çирӗп çемье – çӗр-шыв тӗрекӗ



*Сăн ӳкерчӗкре эсир Çатракассинче пурăнакан Надежда Михайловнăна, Евгений Валериановича тата ноябрӗн 19-мӗшӗнче çутă тӗнчене килнӗ Дамира куратăр. Григорьевсен çемйи çак кунсенче амăш капиталӗн сертификатне тивӗçрӗ. Туслă та тăрăшуллă çемьере виçӗ ача ӳсет.*

**Р. МАКАРОВА сăн ӳкерчӗкӗ.**

Усă курма

# Вăрман ӗçлес текенсене пӗлме

***Çулсеренех Чăваш Республикин Çут çанталăк ресурсӗсемпе экологи министерстви çынсене вăрман фончӗнче харпăр хăй тӗллевӗпе усă курассине йӗркелет. Хальхи вăхăтра вара шăпах вăрман ӗçлес хӗрӳ тапхăр темелле пулӗ. Халăха вутăпа, çурт-йӗр валли йывăç материалпа тивӗçтерессипе епле пынипе паллашас тӗллевпе эпӗ райадминистрацин экономика тата агропромышленность комплексӗн аталанăвӗн пайӗн пуçлăхӗпе Н. КОСТИНĂПА калаçрăм.***

– 2012 çулта Муркаш районӗнче пурăнакансем валли уйăрнă вăрман фончӗн пӗтӗмӗшле калăпăшӗ 8100 кубла метрпа танлашать. Кунта лăсăллă тата çемçе йышши йывăç кӗрет. Çак вичен 41, 3 процентне ӗçлесе илсе тухнă.

Йӗпреç лесничестви халăха йывăçпа тата вутăпа (касмалли виçе 1600 кубла метр) тивӗçтерме пăхнă пулнă. Лăсăллă йывăçăн 210 кубла метрне çыртарнă ӗнтӗ, 1390 кубла метрӗ вара ӗçлес текенсене кӗтет.

Çавăн пекех Шупашкар лесничествинчи касмалли виçе 4100 кубла метрпа танлашнă. Касмалли лаптăкăн 3010 кубла метрне çыртарнă, 1090 кубла метр çинче ӗçлемелле.

Пирӗн района çывăххи вăл Етӗрне лесничестви шутланать. Касмалли пӗтӗмӗшле виçе 2400 кубла метрпа танлашнă. 130 кубла метрӗ çинче ӗçленӗ, 2270 кубла метрӗ вара ӗçлес текенсене кӗтет. Çавăнпа та самантпа усă курма ыйтатпăр.

**– Вăрман ӗçлес текенсен тӳрех лесничествăна каймалла-и?**

– Йывăç, вутă касса илсе килес текенӗн чи малтанах ял тăрăхне каймалла. Вӗсем çак ӗçе йӗркелеççӗ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА** калаçнă.

Юбилей

## *Саламлатпăр*

Пирӗн хаклăран та хаклă юратнă çыннăмăра – Торинкасси ялӗнче пурăнакан **Нина Филипповна СКВОРЦОВĂНА** 75 çул тултарнă ятпа пур кăмăлтан ăшшăн саламлатпăр. Анне, асанне, тăхлачă, Нина Филипповна, сумлă юбилей ячӗпе сана чăваш сурпанӗ пек вăрăм ӗмӗр сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, чун-чӗререн хисеплетпӗр, эс пурришӗн чунтан савăнатпăр. Кӗреку çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, вăрăм ӗмӗр, канлӗ ватлăх сунатпăр.

**Салампа: ывăлӗсем Юрăпа Юлий, кинӗсем Вальăпа Таня, мăнукӗсем Виталийпе Юра, хăтипе тăхлачисем, тăванӗсем.**

Пенси фондӗнчен хыпарлаççӗ

## Инвалидсем валли – марафон

**Инвалидсен пӗтӗм тӗнчери кунӗ умӗн РФ Пенси фончӗн Чăваш Республикинчи уйрăмӗ инвалидсене пенси законодательствине ăнлантарса парассипе информаци марафонне ирттересшине пӗлтерчӗ.**

Марафон çулталăка тăсăлать. Çав тапхăрта массăллă информаци хатӗрӗсем пресс-конференцисемпе пресс-турсем, инвалидсем валли интернет-конференцисем, видеоçыхăну мелӗпе консультацисем йӗркелеççӗ, вырăнсене тухса инвалидсене йышăнаççӗ, массăллă информаци хатӗрӗсенче материалсем пичетлеççӗ.

– Инвалидсем хăйсен прависем пирки пӗлсе тăни, вӗсемпе вăхăтлă усă курма пултарни пысăк пӗлтерӗшлӗ, – палăртрӗ РФ Пенси фончӗн Чăваш Республикинчи уйрăмӗн управляющийӗ Роза Кондратьева. – Çав тӗллевпе ирттеретпӗр те марафона.

Хальхи вăхăтра Пенси фончӗн республикăри уйрăмӗ 9,1 пин инвалида пенсисемпе уйăхсерен тӗрлӗ тӳлевсем парса тăрать. Граждансем пенси фончӗн районти управленийӗн тӳрӗ лини телефонӗпе (62-8-91) çыхăнма пултараççӗ. Кирлӗ пур информацие Раççей Пенси фончӗн сайтӗнче (www.pfrf.ru) вырнаçтарнă.

**Пенси фончӗн районти управленийӗ.**

*Чăваш Республикин Пуçлăхӗн УКАЗӖ*

## 2013 çулта Республика Кунне ирттересси çинчен

Чăваш Республикин «Чăваш Республикин патшалăх уявӗ çинчен» саккунӗпе килӗшӳллӗн, муниципалитет пӗрлехӗсен социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне хавхалантарас, вӗсен инвестици илӗртӳлӗхне ӳстерес тӗллевпе çапла йышăнатăп:

1. 2013 çулта Республика Кунне уявлассипе çыхăннă тӗп мероприятисене хатӗрленсе ирттерессине Шупашкар хулинче, çавăн пекех Чăваш Республикин муниципалитет районӗсен тата хула округӗсен Республика Кунне уявлассипе çыхăннă мероприятисене вӗсен территорийӗнче ирттермелли право çӗнсе илмелли конкурса çӗнтернӗ Тăвай районӗнче йӗркелес.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечӗн:

2013 çулта Республика Кунне хатӗрленсе ирттерес енӗпе пурнăçламалли мероприятисен планне хатӗрлемелле тата çирӗплетмелле;

конкурс условийӗсемпе килӗшӳллӗн Тăвай район администрацине ялсен общество инфратытăмне малалла аталантарма укçа-тенкӗ уйăрса памалла.

3. Чăваш Республикинчи вырăнти хăй тытăмлăх органӗсене 2013 çулта йăлана кӗнӗ Акатуй уявӗсем, Республика Кунне халалланă ытти культмассăллă тата спорт мероприятийӗсем ирттерме сӗнес.

4. Çак Указ ăна официаллă йӗркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кӗрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхӗ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2012, раштав, 1, 138 №.

Республикăра

## Электронлă форматри услугăсем

**Тунти кун ЧР Министрсен Кабинечӗн Председателӗ Иван Моторин правительство членӗсемпе, территори федераллă органсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе канашлу ирттернӗ.**

Канашлура Информполитика министерствин ертӳçи Валентина Андреева патшалăх (муниципаллă) услугăсемпе электронлă майпа тивӗçтерес тӗлӗшпе лару-тăру мӗнле шайра пулнипе паллаштарнă, ведомствăсем хушшинче электронлă майпа çыхăнса ӗçлесси йӗркелесе пыни пирки каласа панă.

Министр хыпарланă тăрăх патшалăх тата муниципаллă услугăсен порталне (www.gosuslugi.cap.ru) 2010 çулта йӗркеленӗ. Унта çак вăхăта 487 тӗрлӗ услуга вырнаçтарнă. Граждансене услугăсемпе электронлă майпа Шупашкар хула администрацийӗ, кунпа пӗрлех ӗç тăвакан 5 влаç органӗ (Вӗрентӳ тата çамрăксен политикин министерстви, Сывлăха сыхлас ӗç тата социаллă аталану министерстви, Культура, национальноç тата архив ӗçӗсен министерстви, Юстици министерстви, Ӗçпе тивӗçтерекен патшалăх службиӗ) тивӗçтереççӗ. Çулталăк вӗçлениччен электронлă формата татах 50 услуга куçармалла (патшалăх услугисем 25 тата муниципаллă услугăсем 25).

Министр çавна та асă илтернӗ. Чăваш Ен РФ субъекчӗсем ӗç тăвакан федераллă влаç органӗсенчен илекен сведенисене тестлассипе çӗр-шыври «пилотлă» ултă регион шутне кӗнӗ.

Асăрхаттару

## Пăр çинче инкеке ан лек

Раштав уйăхӗ пуçланнă май хӗл сиввисем те çитрӗç. Çанталăк вылявне пăхмасăрах юхан шывсем пăрпа витӗнчӗç. Анчах çакă тӳрех çирӗп пăр ларнине пӗлтерместха. Çавăнпа аслисен те, ачасен те çак вăхăтра сӳхе пăр çине кӗресрен асăрханмалла. Ахальлӗн каялла тавăрмалла мар инкек патне пырса тухма пулать. Унран пăрăнма хăçат вулакансене çакăн пек сӗнӳсем паратăп:

– пăр çине кӗнӗ чух унăн çирӗплӗхне тӗрӗслемесӗр ура ярса ан пус;

– пăр çинче çынсем утнă çулпа пыр;

– пăр катăлса сасă парсан е вăл авăнма пуçласан пӗр тăхтаса тăмасăр майӗпен каялла тух;

– пӗр вырăнта çынсем кӗпӗрленсе тăрассинчен асăрхан;

– йӗпе-сапара пăр çине ан кӗр;

– пăр катăлнă вырăнсене ан пыр, катăк пăр çинче ан ярăн;

– пăр çирӗплӗхне нихăçан та урапа тапса ан тӗрӗсле.

Енчен те пăр çинче шыва кӗрсе ӳксен тӳрех çухалса ан кай. Чăн малтан пăр хӗррине алăсемпе саркаланса тыт, пулăшу чӗн. Шыв тарăн мар пулсан хăраса ӳкмесӗр умри пăрпа катса çырана васка е урасемпе хыттăн тапса ярса пăр çине тухма тăрăш.

**К. ПОПОВ,**
**районти патшалăх пушар надзорӗн инспекторӗ.**

# Ыранхи кунпа пурăнакансем те пур

**Фермăри хĕл кунĕсем**

Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Уйкас Янасалти сĕт фермине çитсен малтанах ферма заведующийĕн Валентина Аврамовăн ĕç пӳлĕмĕнче чечексем нумай пулни куç умне пулчĕ. Кунпа пĕрлех ĕçлекенсен канмалли пӳлĕмĕнчи тирпейлĕхпе кунти тĕслĕ кăтартакан телевизор ĕç паракапа фермăра тăрăшакансем хуçалăх аталанăвĕн пĕр лавĕ çинче пынине çирĕплетрĕç.

Ĕç кунĕ пуçланнă кăначчĕ-ха. Сумалли ĕнесем тăракан сарайĕнче тислĕк кăлармалли транспортер ĕçлетчĕ. Тислĕк вăхăтра тухнине сарайĕнчи ытти вырăнсенче тасалăхпа тирпейлĕх хуçаланни çирĕплетрĕ. Коридорсенче йăваланса выртакан пĕр ăпăр-тапăр та çук, урай сарнă вырăнсенче ăна таса тытни куç умне пулать: фельдшер пӳлĕмĕ, канмалли кĕтес, кĕпе-тумтир улăштармалли вырăн, хуралçăсен пӳлĕмĕ. Пур çĕрти тирпейлĕх те кунта ĕçлекенсем хăйсен ĕç вырăнĕ çине хуçалла пăхни çинчен калать.

Уйрăм сăмах ферма коллективĕ пирки. Ĕçе мала хуракан ĕçченсем ăнăçусăр ĕçлеççĕ теейĕмĕн. Ĕне сăвакансем паян кашни ĕне пуçне талăксерен вăтамран 11 килограма яхăн сĕт сăваççĕ.

– Çакă çителĕклĕ пулманнине ăнланатпăр. Хуçалăх ертӳçи тăрăшнипе юлашки çулсенче выльăх апачĕ янтăлама ял хуçалăх техникине çĕнĕрен çителĕклĕ туянни аталану çулĕсене усрĕ. Паян çу каçа янтăланă апата перекетлĕ ытассипе çитсен – пирĕн умри тĕп тĕллев, – терĕ ферма заведующийĕ Валентина Леонидовна.

Хуçалăхăн фермисенче паян ытти шултра выльăхсемсĕр пуçне 244 пуç сумалли ĕне, 600 пуçа яхăн сысна. Хĕл тапхăрĕнче вĕсенчен ытларах продукци илессине хуçалăх ĕçченĕсем хăйсен тĕллевĕ тесе йышăнаççĕ.

Эпир фермăна çитнĕ чух ирхи сăвăм вĕçленнĕ май выльăх пăхакансем ĕнесене утă хурса пама пуçларĕç. Ферма ертӳçинчен рационпа кăсăклантăмăр.

– Ĕне сĕчĕ чĕлхи çинче тенине манмасăр вĕсене апатпа тăтăш тивĕçтерме тăрăшатпăр. Паян ĕнесен рационĕнче 20 килограмм сенаж, 3,5 килограмм çăнăх, 2–3 килограмм утă, çителĕклĕ таран улăм, – хураларĕ В. Аврамова.

Выльăх апачĕ тенĕрен. Хĕл валли хуçалăх кашни условнăй выльăх пуçне 23,5 центнер апат единици хатĕрленĕ. Çакă кăртăнкăраххине утă çителĕксĕртереххи калать. Çавăнпах ĕнтĕ кунта паян перекетлĕх ыйтăвне малти вырăна кăлараççĕ те. Ферма ĕçченĕсем ыранхи кунпа пурăннине сарайсемпе иртнĕ чух унта мăнтăр та таса выльăхсем тăни çирĕплетрĕ. Çакă рейд бригадин членĕсене савăнтарчĕ кăна.

Купăрляри ĕне фермине çитсессĕн те ĕнесем умĕнче апат тулăх пулни, сарайсем выльăхсемпе тулли тăни, хĕле хатĕрленсе витесенче юсав ĕçĕсем туни кашни утăмрах курăнни Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕ выльăх отраслĕне аталанăвăн тĕп шăнăрĕ тесе хакланине çирĕплетрĕ. Çакна ĕнентерекен тĕслĕх. Иртнĕ çул çĕнĕрен тунă тынасем тытмалли сарай çамрăк выльăхсемпе тулли тата вĕсем таса те мăнтăр пулни Купăрлясем ыранхи кунпа пурăнни пирки уççăн хыпарлать.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕн аталанăвĕ – кашни хуçалăх экономикинех тĕреклетмелли тĕп çул-йĕр. Çитнĕ-çитмен пурнăçпа пулсан та, ферма коллективĕсем йывăрлăхсене çĕнсе ĕçлени, хăйсенчен мĕн килнине пурнăçлама тăрăшни «Ударник» хуçалăхăн фермисенче те куç хĕррине юлмарĕ. Кăçалхи хĕл тапхăрĕн малтанхи уйăхĕнче кăна хуçалăх ĕçченĕсем 14,5 тонна (пĕлтĕрхин 111 процентчĕ) аш-какай, 74,9 тонна (42 процент) сĕт туса илнĕ. Сĕт сахалланни ĕнесен кĕтĕвне чакарнипе ытларах палăрать. Çав вăхăтрах Йӳçкассинчи сĕт фермине ĕçлекенсем çителĕксĕрри те палăрчĕ. Тислĕк кăларассипе тата апат илсе кĕртессипе механизаторсем ĕçлеççĕ. Ферма территорийĕнче утă сахалланнă май ăна ытти фермăсенчен тата çулла-кĕркунне хатĕрленĕ вырăнсенчен турттарассине йĕркелеме вăхăт ĕнтĕ.

Вăрманкассинчи сĕт фермине илес пулсан кунта апачĕ те, ĕçлекенĕсем те пур. Панклипе Хурăнкасси фермисенче те, иккĕмĕшсем айсарăм валли улăм турттарса килсен, пысăк çитменлĕхсемех курăнмарĕç.

Хуçалăх механизаци ыйтăвĕ çине çивĕч пăхни кашни фермăрах малти вырăнта пулчĕ. Ĕçе явăçтарнă техникăн тата механизаторсен тăрăшулăхĕ паян обществăлла выльăх-чĕрлĕхе йĕркеллĕ хĕл каçарассинче «Ударник» хуçалăхăн тĕп пулăм пулнине куртăмăр.

**Рейд бригади:**
**Т. АЛЕКСЕЕВА,**
**райадминистрацин экономикăпа АПК аталанăвĕ пайĕн тĕп эксперт-специалисчĕ;**
**А. ФЕДОРОВА,**
**выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцин выльăх тухтăрĕ;**
**А.БЕЛОВ,**
**район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи.**



## Малтисен ретĕнче

*Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн Купăрляри сĕт фермине 13 çул ытла ĕне сăвакан Юлия Иванова (сăн ӳкерчĕкре) кăçал та ӳсĕмсен çулĕнчен чакма шутламасть. 9 уйăхра хăйне çирĕплетсе панă 25 ĕнерен кашнин пуçне вăтамран 4175 килограмм сĕт суса вăл районта та малтисен ретне тухма пултарчĕ. Çак кăтартупа тăрăшуллă хĕрарăм вăй хурса ĕçлесен ӳсĕм чиккине малалла куçарма май пуррине çирĕплетрĕ çеç. «Чĕрĕк ĕмĕре яхăн ĕнтĕ эпĕ выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче вăй хуратăп. Уннчен 11 çула яхăн Кĕртекассинчи сысна фермине ертсе пырса выльăхпа ĕçлес юратăва ӳстертĕм. Техник-осеменатор ĕçне алла илнĕрен паян ĕнесене вăхăтра пĕтĕлентерессине те хамăн тивĕç тесе шутлатăп. Çакă та хуçалăхăн пулас сăвăмĕ çине витĕм кӳнине ăнланатăп», – терĕ Юлия Афанасьевна.*

*Тăрăшни сая каймасть. Ĕçчен хĕрарăма нумаях пулмасть Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствин Тав çырăвĕпе чысларĕç.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Шăшисемпе паянах кĕрешмелле

**Специалист сĕнĕвĕсем**

Паян-ĕнер çеç пĕрремĕш юр çуса иртрĕ. Умра – раштав уйăхĕ. Каламалла, сивĕ кунсем çывхарнă май шăшисем уй-хиртен çынсем пурăнакан вырăнсене массăллăн куçаççĕ. Çак вăхăтра вĕсем хăйсене пĕрле тĕрлĕ чир-чĕр илсе килме пултарни пирки те манма юрамасть. Çавăнпа та шăшисемпе кĕрешес ыйту паян килти хушма хуçалăх тытаканăн кун йĕркинче çирĕп тăмалла.

Шăши евĕр чĕр чунсенчен чи пысăк сăтăр тăваканнисем – уй-хир шăшийĕсем. Вĕсем çулталăкĕпех пысăк активлăхпа палăраççĕ: шăрăх вăхăтра – каçпа, сивĕ кунсенче – кăнтăрла. Вĕсен ĕрчеслĕхĕ уйрăмах пысăк пулни ял çыннисемшĕн пысăк сăтăр çăл куçĕ шутланать.

Кĕр кунĕсенче шăшисем хăйсене хĕл каçма меллĕрех вырăнсем хатĕрлеççĕ. Вĕсем кăмăллакан вырăнсем: дача çуртĕсен путвалĕсем, сарайсем, амбарсем, утă-улăм упранакан вырăнсем. Хĕл кунĕсенче çак вырăнсенчен шăшисем пур еннелле те çăмăллăнах çӳрейреççĕ. Юр сийĕ вĕсене кушаксемпе тăманасенчен хӳтĕлет. Шăшисем уйрăмах çамрăк улмуççисен çĕр çумĕнчи пайне лайăх кăмăллаççĕ. Тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасан вĕсем ăна вулă тавраллах кăшласа çаврăнаççĕ.

Сад-пахчари шăшисемпе кĕрешессине кĕркуннех пуçăнмалла. Çак тĕллевпе малтанах кил хуçин пахчари тĕрлĕ каяшсен куписене пĕтермелле. Çум куракĕсемпе пахча çимĕç çеçкисене ним пăхмасăр çунтарса ямалла. Картасем çумĕнче çулăнмасăр юлнă куракĕсене пĕтерессипе ĕçлемелле.

Шăшисем çамрăк йывăççене кăшласа сиен кӳресçĕ терĕмĕр те вăл йывăççен вуллисене хĕл валли рубероидпа чĕркемелле. Çак материалăн аялти пайне çĕр айне 5–10 см ярсан та ытлашши пулмасть. Йывăççем тавраш ĕнчи çĕре хытă таптаса лартни те шăшисем пырас çула хуплать.

Улмуççи вуллисене полиэтилен хутпа чĕркени тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен шăшисем ăна кăшлама юратаççĕ кăна.

Паян-ыран сад-пахчара, кил-çурт таврашĕнче шăшисем валли наркăмăш хурса парассипе ĕçлемелле. Çамрăк йывăççем нумай вырăнсенче те – вăл паянах пурнăçламалли ĕç. Ăна валли çӳхе хăмасенчен тăватă енне те картланă 30–40 см тăршшĕ ансăр «кормушкăсем» хатĕрлемелле. Çак туннельсене шăшисене пĕтермелли «апат» хурса памалла. Çак çуртсенчи шăши «апачĕ» кăвакармасть, пăнтăхмасть. Вĕсене хĕлле йор витсе ларсан та шăшисем шăршăпа чиперех шыраса тупаççĕ. Çакнашкал трубкăсемпе усă курни наркăмăша килти чăх-чĕп çиессен сыхлать. Çуркунне вĕсене силлесе тăкса вилнĕ шăшисене çĕре чавса чикме пулать.

Тĕрĕслевсем кăтартнă тăрăх кăçал уйхирте шăши шăтăкĕсем пĕлтĕрхипе танлаштарсан самаях сахал. Çапах та уйри улăм урисем патĕнче шăшисемпе кĕрешме эмел хурсан ытлашши пулмасть. Ахальлĕн çав вырăнсем çитес çул шăшисем ĕрчемелли вырăнсем пулса тăраççĕ.

Шăшисен çиме пултарасла хĕ питĕ пысăк. Вĕсем хăйсен кĕлетке йывăрăшĕнчен 3,5 хут ытларах апат çиеççĕ. Хĕлле вĕсем кĕрхи культурăсен çулçисемпе тунисене çисе пурăнаççĕ. Им-çама уй-хирти улăм урисем патне хунипе пĕрлех хуçалăхсен фермисене, складсемпе хранилищĕсене хуни те пысăк усă пулĕ.

«Россельхозцентрăн» республикăри филиалĕн районти пайĕнче шăшисемпе кĕрешме икĕ тĕрлĕ им-çам пур. Пĕри – биологиллĕ препарат («Бактеродентцид»). Ку им-çама çинĕ хыççăн шăшисем пĕр-пĕрне чирлеттерсе яраççĕ. Вĕсем ĕрчеме пăрахаççĕ. Ку препарат çынсемшĕн те, килти выльăх-чĕрлĕхшĕн те сиенлĕ мар. Тепри – химиллĕ препарат («Ратикум»). Икĕ препаратне те тырă пур япаласемпе хатĕрленĕ. Шăшисем вĕсене лайăх çиеççĕ. Хаксем пирки калас пулсан икĕ препарачĕ те пĕр килограммĕ 135 тенкĕ тăрать. Туянас текенсене вăл е ку препарата маларах саккас пама ыйтатпăр.

Пĕрлешӳллĕ тата килти хушма хуçалăхсене çынсем шăшисен ĕрчевлĕхне сăнасах тăрасса шанатăп. Пирĕн тел.: 62-2-77.

**А. ПАВЛОВ,**
**«Россельхозцентрăн» республикăри филиалĕн районти пай пуçлăхĕ.**

**01 пĕлтерет, асăрхаттарать**

# Уяв çывхарать. Тимлĕхе ӳстер!

Пушар хăрушсăрлăхĕ – кун йĕркинче куллен тăракан çивĕч ыйтусенчен пĕри. Çакна иртсе пыракан çулталăкри лару-тăру та уççăн çирĕплетет. Çулталăк пуçланнăранпа районта 39 пушар пулчĕ. Вĕсенче 5 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ, 2 çын пиççе кайрĕ, 1,36 миллион тенкĕлĕх пурлăх кĕлленчĕ. Пушарсен тĕп сăлтавĕсем: усă çулăмпа усă курнă чух асăрханусăр пулни (38,1 процент), электрооборудованисене эксплуатацилес правилăсене пăсни (24,1 процент), юсавсăр кăмакасем тата вĕсемпе усă курнă чух пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнманни (23,3 процент).

Раштав уйăхне кĕтĕмĕр те Çĕнĕ çул уявĕсемччен шутлă кунсем юлаççĕ. Çав савăнăçлă кунсенче вара граждансенчен нумайăшĕ шăпах усă çулăмпа усă курассине тата электрооборудованисене анлă эксплуатацилессине кун йĕркине кĕртет. Ку лайăх-ха, анчах практика çакна кăтартса парать: уяв савăнăçĕпе час-часах тимлĕх иккĕмĕш вырăна юлать. Асăрханулăха чакарни те хаклă ларма пултарать.

Районти пушар хăрушсăрлăхне тишкерсен кашни çулах Çĕнĕ çул уявĕсенче вут-кăвар алхаснă инкексем пулни курăнать. Уявчен вăхăт пур пулсан та çакна калатăп, ытларах инкек хыçĕнче эрех-сăра тата унпа туслашнă май тимлĕхе çухатни тăрать.

Çĕнĕ çула кĕтсе илессине халăх пысăк уяв вырăннех йышăнать. Ку тĕлĕшпе коллективсенче тăтăшах çĕнĕлĕхсем кĕртеççĕ, елка илемне ӳстерме чылайăшĕ электричество çутипе, çуртасемпе, пиротехника изделийĕсемпе усă курать. Халĕ каланине шута илсе çак тапхăр пушар тухаслăх тĕлĕшпе пысăк хăрушлăхпа палăрать. Иртнĕ çул Çĕнĕ çул вăхăтĕнче районта 3 пушар пулнăччĕ. Çак инкексем кăçал ан пулччăр тата Çĕнĕ çул уявĕсене «хĕрлĕ автан» ан тĕксĕмлеттĕр тесен, район çыннисене маларах асăрхаттаратпăр, кашнийĕнех пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнмаллине систеретпĕр. Çав тĕллевпе:

– елккăсем ирттерме хатĕрленме коллективсенче хальтерехех ответлă çынсене çирĕплетмелле;

– яваплă çынсен патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕнче пушар хăрушсăрлăхĕпе инструктаж тухмалла та ăна вырăнсенче Çĕнĕ çул уявлама хутшăнакансемпе ирттермелле;

– елка ирттерме хатĕрлекен пӳлĕмсене тĕплĕн тишкермелле, пушар сӳнтермелли пирвайхи хатĕрсем янтăлас тĕлĕшпе уйрăмăн тимлĕ пулмалла;

– елка вăхăчĕ пирки вырăнти пушар хуралне маларах пĕлтермелле;

– елкăна пушар хуралĕн ирĕкĕсĕр нисхта те вырнаçтармалла мар;

– ан манăр, елка ирттермелли пӳлĕмĕн урама тухма икĕ алăк пулмалла;

– елка лартнă чух ăна алăксем патне вырнаçтарас çук, унпа стена тата мачча хушши пĕр метртан кая мар пулмалла;

– елкăна илемлетме хăвăрт хыпса илекен теттесемпе, ватăпа, бенгали çуртисемпе усă курма юрамасть;

– елкăра заводра хатĕрленĕ электрогирляндăсемпе çеç усă курмалла.

Уяв вăхăтĕнче электрогирляндăсем çинче пĕчĕк кăлтăк асăрхасан электричествăна пĕр тăхтамасăр сӳнтермелле. Елка çинче çулăм курăнсан асăрхасан елкăна çийĕнчех çĕре ӳкермелле те хăвăрт сӳнтерме мерăсем йышăнмалла. Искусстволла елкăна шывпа сӳнтерни тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен çуннă чух синтетика ирĕлет, шыв лексен вĕрсе кайма тата шыв юххипе айккинелле сарăлма пултарать. Кун пек чухне огнетушитель – чи вырăнли. Вĕсене маларах туянса хумалла.

**А. ИЗОНОВ,**
**патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

# Контрактпа службăра тăнин лайăх енĕсем чылай



Турай ял тăрăхĕнчи Анаткасси ялĕнче çуралса ÿснĕ Владимир Иванов **(сăн ÿкерчĕкре)** 2005 çулта çара контракт çырса кайнă. Маларах, 1999–2001 çулсенче, срочнăй службăра тăнă хыççăн тăван яла таврăннă-ха вăл. Ĕç те тупнă. «Çав вăхăтра военкоматран справка илмеллеччĕ манăн. Унта шăпах çара контрактпа каякансене пуçтараççĕ пулнă. Çар условийĕсемпе, унта пурăнмалли йĕркепе паллашнă хыççăн эпĕ те килĕшрĕм», – каласа парать паян Владимир.

Çапла вăл виçĕ çуллăха контракт çырать. Ыттисемпе пĕрле Самара облаçĕнчи çар чаçне çитет. Унта вырнаçнă 15-мĕш уйрăм мотострелоксен бригадинче служба пуçланать. Ку бригадăна çарта пулнисем, çарпа кăсăкланакансем «миротворецсем» тенипе лайăх пĕлеççĕ. Раççейĕпе те кун пекки пĕртен-пĕр бригада кăна. Апла пулсан кунта салтаксене те, контрактниксене те тĕплĕ суйласа илеççĕ.

Виçĕ çул хушшинче Владимир икĕ тапхăрпа Абхазире çар тивĕçне пурнăçлать. Унта вăрçă пĕтнĕ хыççăн çар чаçĕсене кăлараççĕ...

«Пурнăç условийĕсем лайăххах, апатлантарасси те чиперех. Пурăнма казармăра пурăнатпăр. Уйăхне 30 пин тенкĕне майлă укçа илетпĕр. Çитес çултанпа ĕç укçи ÿсмеллине калаççĕ. Сывă пурнăç йĕрки, паллах. Япăх теме сăлтав çук», – çапла пĕлтерчĕ Владимир служба пирки.

Вăл каланă тăрăх малтанхи виçĕ çуллăх контракт çыракансене тÿрех пухăнакан ипотека системин реестрне кĕртеççĕ. Çапла вара контрактникăн счечĕ çине патшалăх уйăхсерен укçа куçарса парать – хваттер туянса пама. Ку сумма тĕрлĕрен пулать, паллах. Владимир пĕлтернĕ тăрăх унăн та, пĕлĕшĕсен те вăтамран çулталăкра 200 пин тенкĕ ытла куçать. Контракт килĕшĕвĕ вĕçленнĕ хыççăн ăна тăсма та пулать: 5 е 10 çуллăха. Каллех патшалăх укça парса пулăшать. Сăмахран, 10 çул хыççăн салтак урăх контракт çырас темерĕ пулсан та çав счет çинчи укçатенкĕне патшалăх каялла илмест. Пухăннă укçа çумне салтак хăйĕн укçитенкине хушса çĕр-шывăн кирек хăш кĕтесĕнче те хваттер туянма пултарать.

Çемьеллисем валли те условисене пĕтĕмпех туса панине пĕлтерчĕ Владимир. Хула евĕр поселокра ача-пăча сачĕ иккĕ, шкул пуррине калать вăл. Çемьеллисене тата хваттерпе те хăвăртрах тивĕçтереççĕ-мĕн. Самара хули те 40 çухрăмра кăна вырнаçнă.

Контрактпа службăра тăнин лайăх енĕ татах та пур – стаж пырать. Саккунпа килĕшÿллĕн тивĕçлĕ канăва та чылай маларах тухаççĕ вĕсем. Çапла вара вăй питти чухнех пенси илнипе пĕрле (укçи сахал маррине палăртмалла) урăх ĕç те çăмăллăнах тупма пулать.

Çара контракт мелĕпе аслă шкулсенче вĕренекенсене те илеççĕ. Пур çĕрте те ăслă-тăнлă çынсем кирлĕ-çке-ха. Сесси вăхăтĕнче вара, сăмахран, Самарăран Шупашкара чăрмавсăрах кайса экзамен-зачет тытма пулать.

Пĕр сăмахпа каласан çамрăксен нумай та шухăшламалла мар, контрактпа çара кайсан темиçе мулкача харăсах тытма пулать: пурăнмалли вырăн, лайăх ĕç укçи, патшалăх хваттер туянса парать, тивĕçлĕ канăва та 60 çулччен кĕтмелле мар.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Полици хроникинчен

## Спиртлă шĕвек ĕмĕрлĕх куç хуптарать

Эрех тесен хăшне-пĕрне урăх нимĕн те кирлĕ мар. Лавккана кайма укçа пĕтсен вара темĕн тĕрлĕ шĕвек ĕçме те тиркемеççĕ. Спирт пур шĕвек сывлăхшăн çав тери сиенлĕ пулни ун пек чух шухăшлаттармасть курăнать. «Вĕресе кайнă» ăш-чике лăплантарса кăна пултăр. Кайранхине Турă пĕлет темелли çеç юлать. Çапла Ивановка ялĕнче пурăннă пĕр арçын та спирт пур шĕвеке пĕр шухăшламасăрах ĕçнĕ. Аллăран иртнĕскер хăйне япăх туйма пуçланă. Васкавлă пулăшу бригади çитиччен вара арçын вилсе кайнă.

## Те выçса çитнĕ, те уява хатĕрленнĕ

Пиччĕшĕпе шăллĕ, Муркашра пурăнаканскерсем, ирпе Москакассине çитеççĕ. Пĕр хуçалăха кĕрсе пÿрт алăкĕн çăрине тăпăлтарса кăлараççĕ. Выçса çитнĕренши, Çĕнĕ çула хатĕрленсе-ши, холодильникран пĕр хур ашĕ тата шурă эрех вăрласа тухаççĕ.
Халĕ ку ĕçпе следстви пырать, уголовлă ĕç пуçарма хатĕрленеççĕ.

## Каллех – суд тенкелĕ çине

Полицейскисем Мăн Сĕнтĕрти патруль вăхăтĕнче çав ялта пурăнакан, маларах судпа айăпланнă арçынна чарса тĕрĕслеме шутлаççĕ. Арçынна чарса тĕрĕсех тунă вĕсем: унăн хăйпе пĕрле мăкăнь ÿсен-тăранĕ пулнă-мĕн. Ку тĕлĕшпе халĕ уголовлă ĕç пуçарнă. Апла саккунпа килĕшÿллĕн арçыннăн суд тенкелĕ çине тепĕр хут ларма тивĕ.

**Пичете Шалти ĕçсен министерствин районти пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

## Тав тăватпăр

Уйкас Хачăкра пурăннă Николай Васильевич Гаврилова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн 2 № район больницин тата Москакасси амбулаторийĕн коллективĕсене, Мăн Сĕнтĕрти райпо ĕçченĕсене, Муркашри тата хăй ĕçленĕ Мăн Сĕнтĕрти васкавлă пулăшу паракан уйрăмсенче ĕçлекенсене пурне те, ял-йыша, кÿршĕсене, унта пынă мĕн пур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Гавриловсен, Волковсен, Красновсен çемйисем.**

## Прогноз погоды

| | среда 5 декабря | | | | четверг 6 декабря | | | | пятница 7 декабря | | | | суббота 8 декабря | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +2 | 0 | 0 | -1 | -3 | -4 | -3 | -4 | -4 | -6 | -4 | -5 | -4 | -3 | 0 | +1 |
| Давление мм | 734 | 736 | 740 | 743 | 746 | 748 | 749 | 750 | 750 | 749 | 749 | 748 | 748 | 748 | 751 | 753 |
| Влажность % | 98 | 94 | 86 | 85 | 82 | 77 | 75 | 79 | 74 | 79 | 72 | 84 | 93 | 99 | 98 | 100 |
| Ветер м/сек | 5 | 5 | 4 | 3 | 3 | 2 | 3 | 4 | 4 | 5 | 5 | 5 | 5 | 5 | 4 | 3 |
| | Ю | Ю-З | З | З | С-З | С | В | В | В | В | В | В | В | В | В | В |
| Солнце восход / заход | | 09:06 | 16:20 | | | 09:08 | 16:20 | | | 09:09 | 16:19 | | | 09:10 | 16:19 | |
| Луна восход / заход | | 23:40 | 12:32 | | | - | 12:50 | | | 00:56 | 13:08 | | | 02:14 | 13:27 | |


Пĕлтерÿсем. Объявления

ООО «Виктория»
* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.
Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

Осенняя распродажа: мотоблоки, мини-тракторы, навесное оборудование, снегоуборочная техника, запчасти, ремонт. Тел.: 8-967-470-31-43. 10-12.

В Нижний Новгород требуются рабочие на сборочное производство автофургонов и спецавтотехники, также газоэлектросварщики с опытом работы на полуавтомате. Вахтовый метод (две недели через две). Питание, проживание бесплатно. Выезд группами до предприятия. Соц. гарантии. З/п 25000-40000 руб. в месяц. Тел.: 8-908-766-41-45 (Н.Новгород), 8-906-386-56-82 (Чувашия). 4-8.

* * *

В стабильную компанию на постоянную работу в связи с развитием требуются наполнители баллонов. Достойная заработная плата, официальное трудоустройство, социальные гарантии. Тел.: (843)255-32-67. 2-4.

* * *

Продаю автомобиль ВАЗ-2107 2005 года выпуска, карбюратор, газовое оборудование, второй хозяин, оригинал, цвет зеленый, торг, срочно. Недорого.
Тел.: 8-917-659-30-32.

* * *

Вун пĕр уйăхри хура-шурă тĕслĕ тынашки сутатăп. Тел.: 8-917-656-35-03.

* * *

Апрель уйăхĕнче пăруламалли çулталăк та сакăр уйăхри хура тынашки сутатăп. Тел.: 8-927-993-63-50.

* * *

Паломнические поездки: Праздничная литургия у мощей Св. Николая Чудотворца (г. Бари-Италия) с 16.12.2012 г. по 23.12.2012 г. от 50000 руб. Рождество Христово на Святой Земле (Иерусалим) с 04.01.2013 г. по 11.01.2013 г. – 50000 руб. Рождество на подворье Афонского монастыря в Салониках с 02.01.2013 г. по 09.01.2013 г. от 60000 руб. Обращаться: с. Моргауши, ул. Мира, 6 (3 этаж, «Ростелеком»), Благотворительный фонд «Возрождение храмов». Тел.: 8-905-342-11-50. 1-2.


* * *

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:021001:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Портнова Римма Ананьевна, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Апчары, ул. Молодежная, д. 66. Портнов Федор Борисович, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, ул. Л. Комсомола, д. 80, кв. 47. Портнов Александр Борисович, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, ул. Базарная, д. 5, кв. 89.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:021001:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

* * *

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:210201:111 о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельных участков, образованных в счет земельных долей. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Волков Викентий Леонидович, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Большие Токшики, ул. Ленина, д. 22. Волкова Валентина Михайловна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Чапаева, д. 57. Волкова Нина Порфирьевна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Большие Токшики, ул. Ленина, д. 22.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Красновой Р.Н., номер квалификационного аттестата 21-11-28 от 08.02.2011 г. Почтовый адрес: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25. Электронная почта: ooozemly@rambler.ru.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:210201:111. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, поле № 7, полевой севооборот № 1, участок № 4.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 428032, Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Ярославская, д. 25, а также в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: 428000,Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

* * *

Кадастровый инженер Юрин Евгений Викторович, адрес: 428027, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. 9 Пятилетки, д.20, кв.309, тел./факс (8352) 522586, E-mail: apex@cbx.ru, извещает о необходимости согласования проекта межевания земельных участков, образуемых путем выдела в счет земельных долей из земель сельскохозяйственного назначения, принадлежащих гражданам на праве общей долевой собственности.

Исходный земельный участок 21:17:250801:1, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Александровское сельское поселение, территория бывшего СХПК им. Ильича. Образуемый участок расположен примерно в 2.5 км к юго-востоку от н.п. Паймурзино.

Заказчик Егоров Федор Аверкиевич, 429535, Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Васькино, ул. Ленина, д. 32, телефон: (83541)6-15-00.

С проектом межевания можно ознакомиться у заказчика и кадастрового инженера по вышеуказанным адресам со дня опубликования данного объявления по 5 января 2013 г.

Предложения заинтересованных лиц о доработке проекта межевания после ознакомления с ним, возражения и замечания по местоположению и площади образуемых земельных участков принимаются кадастровым инженером в письменном виде по адресу электронной почты apex@cbx.ru и почтовому адресу 428027, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. 9 Пятилетки, д. 20, кв. 309, а также в органе кадастрового учета по месту расположения земельных участков до 5 января 2013 г.

При направлении мотивированных возражений, замечаний, предложений по местоположению границ и площади образуемых земельных участков предъявлять документы о праве на земельный участок и удостоверение личности.

* * *

### ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНЫХ УЧАСТКОВ

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:101601:780, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Ремнева Раиса Васильевна, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Чамыши, ул. Первая, д. 64. Ремнева Лия Григорьевна, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Басурманы, ул. Западная, д. 5.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:101601:780. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Орининское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.





К сведению ПОКУПАТЕЛЕЙ!
На первом этаже здания Дома быта открылась ВЕТЕРИНАРНАЯ АПТЕКА с широким ассортиментом медицинских препаратов и кормовых добавок для животных. 1-3.

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 7-10.






8 декабря в РДК с 8.00 час. до 16.00 час. состоится выставка-продажа обуви Ульяновской, Белорусской и др. российских обувных фабрик из натуральной кожи, а также выставка-продажа трикотажных изделий. 3-5.

Виççĕ пăруланă хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп, 42–45 пин тенкĕ.
Тел.: 8-903-063-64-63.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 9-10.



Муркаш районĕнчи «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви

ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Белов А.П.
Пичете панă 04.12.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4689.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.